28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 тус.

1945 МАЙ 10 КĔÇНЕРНИКУН 89(6840) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔН, ШУПАШКАР КУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

И. В. Сталин юлташ халăха чĕнсе калани

Юлташсем! Çĕршыври тăвансем!

Германие çĕнтернин аслă кунĕ килсе çитрĕ. Хĕрлĕ Çарпа пирĕн союзниксен çарĕсем чĕркуççи çине тăратнă фашистла Германи хăйне çĕнтернине йышăнчĕ те хăй пĕр сăмахсăрах парăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Майăн 7-мĕшĕнче Реймс хулинче Германи парăнасси çинчен сырнă малтанхи протокола алă пуснă. Майăн 8-мĕшĕнче нимĕçсен Главнокомандованийĕн представителĕсем Берлинра хăйсем парăнасси çинчен калакан тататклă акта алă пусрĕç, ăна алă пуснă чухне союзниксен çарĕсен Верховнăй Командованийĕн тата Совет çарĕсен Верховнăй Главнокомандованийĕн представителĕсем пулнă. Çав акта пурнăçа кĕртесси майăн 8-мĕшĕнчи 24 сехетрен пуçланчĕ.

Договорсемпе килĕшӳсене ахаль хут татăкĕ вырăнне кăна хуракан нимĕç пуçлăхĕсен кашкăрла йăлисене пĕлсе тăрса, эпир вĕсем сăмах панине ĕненме пултараймастпăр. Çапах та паян ирхине нимĕç çарĕсем, хăйсем парăнасси пирки çырнă акта пурнăçа кĕртсе, хĕçпăшала йышлăн пăрахма тата пирĕн çарсене тыткăна парăнма тытăнчĕç. Ку вара ахаль хут татăкĕ мар. Ку вăл—Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем чăн-чăнах парăнни пулса тăрать. Чăн та ĕнтĕ, нимĕç çарĕсен Чехословаки районĕнчи пĕр ушкăнĕ халĕ те парăнассинчен пăрăнма тăрăшать-ха. Анчах та Хĕрлĕ Çар ăна тăн кĕртме пултарĕ тесе эпĕ шансах тăратăп.

Халĕ ĕнтĕ эпир: Германие тататклăнах çĕмĕрсе тăкнин историллĕ кунĕ, пирĕн халăх Германи империализмне хирĕç кĕрешсе тунă аслă çĕнтерĕвĕн кунĕ килсе çитрĕ тесе, çирĕппĕнех калама пултаратпăр.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварас тесе эпир тунă аслă жертвăсем, вăрçă пынă вăхăтра пирĕн халăх тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсемпе хĕн-хурсем, Тăван çĕршыва хӳтĕлесе хăварас тесе тылра тата фронтра хĕрӳллĕн ĕçлени,—çаксем пурте ахаль пулмарĕç, тăшмана пĕтĕмпех çĕнтернипе вĕçленчĕç. Славян халăхĕсем, хăйсен пурнăçĕшĕн, хăйсен никама пăхăнманлăхĕшĕн ĕмĕрсем хушши туса пынă кĕрешӳ нимĕç захватчикĕсене тата нимĕç тиранине çĕнтернипе пĕтрĕ.

Паянтан пуçласа Европа çинче халăхсен ирĕклĕхĕн тата халăхсем хушшинчи мирĕн аслă ялавĕ ялкăшса тăрĕ.

Виçĕ çул каярах Гитлер пĕтĕм халăх умĕнче çапла пĕлтерчĕ: манăн задача—Совет Союзне пайласа унтан Кавказа, Украинăна, Белоруссие, Балтика тăрăхне тата ытти областьсене туртса илесси пулать, терĕ. Вăл тӳрех çапла каларĕ: «Эпир Российăна пĕтерсе тăкăпăр, вăл урăх нихăçан та ура çине тăма ан пултартăр», терĕ. Çакă вăл виçĕ çул каярах пулнă. Анчах Гитлерăн ухмахла шухăшĕсем пурнăçа кĕреймерĕç,—вăрçă пынă вăхăтра вĕсем тусан пек вĕççе саланса кайрĕç. Чăннипе илсен, гитлеровецсем ĕмĕтленнĕ пек мар, пачах урăхла пулса тухрĕ. Германие пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Германи çарĕсем парăнаççĕ. Совет Союзĕ, вăл Германие пайлама та, ăна пĕтерсе тăкма та шутламасть пулин те, çĕнтерӳ уявне уявлать.

Юлташсем! Отечественнăй Аслă вăрçă эпир тататклăнах çĕнтернипе вĕçленчĕ. Европăри вăрçă тапхăрĕ пĕтрĕ. Мирлĕ строительство тапхăрĕ пуçланчĕ.

Çĕнтерӳ ячĕпе саламлатăп Сире, манăн çĕршыври хаклă тăванăмăрсем!

ХАМĂР ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН НИКАМА ПĂХĂНМАНЛĂХНЕ ХӲТĔЛЕСЕ ХĂВАРНĂ ТАТА ТĂШМАНА ÇĔНТЕРНĔ ПИРĔН ПАТТĂР ХĔРЛĔ ÇАРА МУХТАВ!

ПИРĔН АСЛĂ ХАЛĂХА, ÇĔНТЕРӲÇĔ-ХАЛĂХА МУХТАВ!

ТĂШМАНА ХИРĔÇ ÇАПĂÇСА ВИЛНĔ ТАТА ХАМĂР ХАЛĂХĂН ИРĔКЛĔХĔПЕ ТЕЛЕЙĔШĔН ХАЙСЕН ПУРНĂÇНЕ ПАНА ГЕРОЙСЕНЕ ĔМĔР-ĔМĔР МУХТАВ!

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн çарĕсене

1945 çулхи майăн 8-мĕшĕнче Берлин хулинче Германин Верховнăй командованийĕн представителĕсем Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем пĕр сăмахсăрах парăнасси çинчен çырнă акта алă пусрĕç.

Совет халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пынă Отечественнăй Аслă вăрçă çĕнтерӳллĕн вĕçленчĕ. Германие пĕтĕмпех аркатса тăкнă.

Юлташсем — красноармеецсем, краснофлотецсем, сержантсем, старшинасем, çарпа флот офицерĕсем, генералсем, адмиралсемпе маршалсем! Сире Отечественнăй Аслă вăрçă çĕнтерӳллĕн пĕтнĕ ятпа саламлатăп.

Германие тататклăнах çĕнтернине яланлăха палăртса хăварас тесе, паян, майăн 9-мĕшĕнче, Çĕнтерӳ Кунĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, пин тупăпа вăтăр хут пĕр харăс персе, Хĕрлĕ Çарăн паттăр çарĕсене тата Тинĕс-Çар флочĕн карапĕсемпе чаçĕсене, çак питех те паха çĕнтерĕве тунăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Сывă пулччăр çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ!

Верховнăй Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ ***И. СТАЛИН.***

1945 çулхи майăн 9-мĕшĕ. № 369.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне ***КОНЕВА***
Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне ***ПЕТРОВА***

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çĕрле питĕ хăвăрт пырса çапнă хыççăн, тăшмана хирĕç тăнине пĕтерсе партнă та паян, майăн 9-мĕшĕнче, 4 сехетре ирхине пирĕнпе союзлă Чехословакин столицине — ПРАГА хулине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

ПРАГА хулине ирĕке кăларасшăн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ГОРДОВ генерал-полковникăн, ПУХОВ генерал полковникăн, ЖАДОВ генерал-полковникăн, МАЛАНДИН генерал-лейтенантăн, ЛЯМИН генерал-майорăн, ЗЕЛИНСКИЙ полковникăн, ЧЕРОКМАНОВ генерал-лейтенантăн, ПУЗИКОВ генерал-лейтенантăн, БАКЛАНОВ генерал-майорăн, ИВАКОВ полковникăн, ОРЛОВ генерал-майорăн, ДАНИЛОВСКИЙ генерал майорăн, ВОЛКОВИЧ генерал-майорăн, КРАСНОВ генерал-майорăн çарĕсем; ЛЕЛЮШЕНКО генерал-полковникăн, РЫБАЛКО генерал-полковникăн, танковăй çарсен генерал-полковникĕн НОВИКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн УПМАНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн БАХМЕТЬЕВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БЕЛОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЕРМАКОВĂН, ПУШКАРЕВ полковникăн, ШМЫЛОВ полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн МИТРОФАНОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн НОВИКОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СУХОВĂН, КАРНЮШКИН подполковникăн, ЩЕРБАК подполковникăн, СЕЛИВАНЧИК полковникăн, ТУРКИН полковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ВАРЕНЦОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОЖУХОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ДОБРИНСКИН, артиллери генерал-майорĕн КРАСНОКУТСКИН, артиллери генерал-майорĕн МЕНТЮКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн НИКОЛЬСКИН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КУБЕЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОЛУЭКТОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ДЗЕВУЛЬСКИН артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВĂН, НИКИШИН полковникăн, авиаци генерал-майорĕн АРХАНГЕЛЬСКИН, авиаци генерал-майорĕн ЗАБАЛУЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн СЛЮСАРЕВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УТИНĂН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн ГАЛИЦКИН, ПОЛУЭКТОВ полковникăн, КАМЕНЧУК полковникăн, КОРДЮКОВ полковникăн, СКОРОХОД подполковникăн, СОБОЛЕВ подполковникăн сапёрĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУЛЫЧЕВĂН, сыхăну çарĕсен генерал-майорĕн АХРЕМЕНКĂН, ОСТРЕНКО полковникăн. БОРИСОВ полковникăн, СИМХОВИЧ полковникăн, БОГОМОЛОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ПРАГА хулине ирĕке кăларасшăн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ПРАЖСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, майăн 9-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, пирĕнпе союзлă Чехословакин столицине—ПРАГА хулине ирĕке кăларнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ПРАГА хулине ирĕке кăларасшăн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн тата Чехословаки республикин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховнăй Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ ***И. СТАЛИН.***

1945 çулхи майăн 9-мĕшĕ. № 368.

ВЦСПС президиумĕнче

Рабочисемпе служащисен пурнăçне лайăхлатмашкăн 10 миллиард тенкĕ укçа

ВЦСПС президиумĕ хăйĕн юлашки ларăвĕнче социальнăй страховани 1945 çулхи бюджетне пăхса тухнă.

Социальнăй страховани бюджечĕ çинчен ВЦСПС-ăн социальнăй страховани отделĕн заведующийĕ Горбунов юлташ доклад туса панă. Вăл çапла каланă: кăçал социальнăй страховани бюджечĕ 10.1 миллиард тенкĕлĕх пулать, пĕлтĕрхинчен 1.661 миллион тенкĕ ытларах пулать. Çакă вăл вăрçă вăхăтĕнчи условисенче партипе правительство ĕçсыннисемшĕн мĕн тери тăрăшнине питĕ лайăх кăтартса парать.

Ачасемпе амăшĕсене пăхас ĕç валли тата рабочисемпе служащисене кантарас, сыватас ĕç валли паракан укçа хисепĕ чылай ӳсет. Кăçал çулла пионер лагерĕсенче тата площадкăсенче рабочисемпе служащисен 1.675 пин ачи—пĕлтĕрхинчен 522 пин ача ытларах канмалла, унта чи малтан фронтовиксен ачисене ямалла. Йывăр çын пулнă тата ача çуратнă хĕрарăмсене пособисем пама пĕлтĕрхинчен виçĕ хута яхăн ытла укçа уйăрса хураççĕ—130 миллион тенкĕ вырăнне 345 миллион тенкĕ уйăрса хураççĕ.

Кану çуртĕсемпе санаторисен хисепĕ ӳсет, вĕсем 460-тан кая мар пулаççĕ. Кăçал 750.000 ĕçсыннине кантараççĕ тата сыватаççĕ.

ВЦСПС президиумĕ социальнăй страховани 1945 çулхи бюджетне çирĕплетнĕ тата çав укçа-тенке тĕрĕс расходланине тăтăшах контроллесе тăма хушнă. (ТАСС).

ÇĔНТЕРӲ ПРАÇНИКĔ—РЕСПУБЛИКĂРА

Пĕтĕм халăх Хĕрлĕ Çарпа Сталин юлташа тав тăвать

„Мухтав Хĕрлĕ Çара! Мухтав Сталина!"

Завод картишĕнчи Ленин памятникĕ умне рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем нумай пухăннă. Вĕсем пурте хăйсене савăнăçлă тытаççĕ, радио вăрçă чарăнни çинчен панă хыпар пирки калаçаççĕ.

Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕн митингне ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн парторгĕ М. Дмитриев юлташ уçать. Сăмах завод директорĕ В. Поздняков юлташ илет.

— Паян эпир,—тет Поздняков юлташ. —Çĕнтерӳ Кунне уявлатпăр. Отечественнăй аслă вăрçă Совет Союзĕ çĕнтернипе, гитлерла Германи парăннипе вĕçленчĕ. Çак историллĕ çĕнтерĕве тунă çĕре, Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе пĕрлех, тылри ĕççынниссем те чылай вăй хунă. Пирĕн завод коллективĕ вăрçă вăхăтĕнче начар мар ĕçлерĕ. Март уйăхĕнчи ĕçсемшĕн пире Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

Поздняков юлташ завод коллективне ырми-канми ĕçленĕшĕн Çĕнтерӳ Кунĕ ячĕпе тав тăвать.

Унтан вагонсем тăвакан цех начальникĕ Н. Белов юлташ сăмах калать:

— Пирĕн цех коллективĕ, — тет вăл, — иртнĕ уйăхра пысăк çĕнтерӳ турĕ: производство планне чылай ирттерсе тултарчĕ. Коллектив икĕ уйăх ĕнтĕ заводри куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава алăран вĕçертмест. Çак савăнăçлă кунсенче эпир татах та тухăçлăрах ĕçлĕпĕр,—тесе сăмах парать Белов юлташ хăйĕн цехĕнче ĕçлекенсен ячĕпе.

Трибуна çине фронтран аманса таврăннă Смолин юлташ, халĕ заводра ĕçлекенскер, хăпарать. Унăн кăкрине çапăçу хирĕнче илнĕ икĕ орден илемлетет. Смолин юлташ чăвашла калать:

— Совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар, аслă Сталин ертсе пынипе, çĕнтерчĕç. Мухтав тăван Хĕрлĕ Çара, мухтав юратнă Сталина!—тет юлашкинчен Смолин юлташ.

Çулпуç ятне асăнсан, митингра пулнисем пурте хавхаланса алă çупаççĕ. Ăна хисеплесе «урра» кăшкăраççĕ. «Сывă пултăр Сталин юлташ! Мухтав Сталина!»—тесе каланисем янраса тăраççĕ митингра.

Çакăнпа митинг хупăнать.

Халăх çĕнтерӳ праçникне уявлать

СĔНТĔР. майăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян район центрĕнче пысăк митинг пулса иртрĕ. Вăл митингра рабочисем, служащисем тата сывăхри колхозсенчен килнĕ колхозниксемпе колхозницăсем пулчĕç. Митингра ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Петров юлташ сăмах тухса каларĕ. — Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар,—терĕ Петров юлташ,—нимĕç вăрăхурахĕсене аркатса тăкрĕ. пирĕн урама чаплă уяв çитрĕ.

Петров юлташ çуракине ăнăçлă ирттерессишĕн, вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме чĕнчĕ.

Районри военком Ладин, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Давыдова юлташсем хыççăн, колхозниксем пĕрин хыççăн тепри туха-туха каларĕç.

«Новая Юнга» колхоз председателĕ Ванюшкина юлташ пысăк хумханупа çапла каларĕ: эпир çĕнтерӳ кунĕ çывăххине туйса ĕçлерĕмĕр. Пирĕн колхоз тĕштырăсене акса пĕтерчĕ, халĕ эпир кая юлса акмалли тырăсене акатпăр тата çĕрулми вырăнĕсене сухалатпăр. Çуракине сывăх кунсенче вĕçлессишĕн кĕрешетпĕр. Пирĕн колхозниксем Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне 48.000 тенкĕлĕх сырăнса илчĕç, укçине те çийĕнчех пĕрса татрĕç. Тăван çĕршывăн пултарулăхĕне паттăрлăхĕшĕн пурне те панă тата памалалла та паратпăр. Сывă пултăр пирĕн аслă та аслă çулпуç Сталин юлташ! — тесе вĕçлет хăйĕн хĕрӳллĕ сăмахне Ванюшкина юлташ. Митинга пухăннисем Сталин юлташа сывлăх сунса тăвăллăн алă çупаççĕ.

Трибуна çине 1905 çулхи революци ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Елагин юлташ улăхать.

— Пирĕн савăнăçа нимĕнле виçепе те виçме çук. Сталин юлташа кăмăлласа тав тума сăмах та тупма çук,—тет Елагин юлташ.—4 çул хушшинче пирĕн колхоз начарланмарĕ, вăйланса пычĕ. эпир вăрçă пынă вăхăтра та вăйлă тырпул туса илтĕмĕр, выльăх-чĕрлĕхсен шутне те чакармарăмăр. Колхозниксемпе колхозницăсем, çамрăксем, вăрçă хирĕнче çапăçнă фронтовиксем таврăнсан, вĕсен умĕнче хĕрелмĕç, вĕсем фонтри пекех хăйсене хăйсем шеллемесĕр ĕçлени çинчен калаçа парĕç.

Эпир кăçал та çуракине лайăх хатĕрленсе тухрăмăр, тĕштырăсене акса та пĕтертĕмĕр. Майăн 13-мĕшĕ тĕлне, кайран акмалли тырăсене, техникăллă культурăсене акса тата çĕрулми лартса пĕтерме пулатпăр.

Паянхи кун тĕлне Сĕнтĕр районĕнчи 12 колхоз тĕштырăсене акса пĕтернĕ.

В. ФЕДОТОВ.

КĔТНĔ, САВĂНĂÇЛĂ КУН ÇИТРĔ

СĔНТĔРВĂРРИ, майăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Нимĕçсен фашистла çарĕсем парăнни çинчен радиопа панă хыпар пĕтĕм районри предприятисемпе колхозсене çиçĕм пек хăвăртлăхпа сарăлчĕ. Кашни колхоза, предприятипе учреждение никам чĕнмесĕрех халăх пухăнать. Пурте çĕнтерӳ кунĕ çитнĕ ятпа пĕрне-пĕри сывлăх сунаççĕ, чуптăваççĕ.

Райисполкомра хулари халăх йышлăн пухăннă. Митингра райисполком председателĕ Маклашкин юлташ, халăха саламласа, хĕрӳллĕ сăмах калать.

— Пирĕн рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе колхозницăсем вăрçăн йывăр кунĕсенче те пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтерессе çирĕп шанса ĕçлерĕç. Паянхи уяв кунне эпир пĕтĕм чун-чĕререн кĕтрĕмĕр. Кĕтнĕ, савăнăçлă кун çитрĕ. Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çара тата çĕршыва мĕн кирлине пурне те парассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Вăрçă пынă вăхăтра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе ăнăçлă ĕçленĕшĕн ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕç пултăмăр. Çак ялава хамăр алăрах хăварассишĕн, кăçал çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерсе, вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!

Маклашкин юлташ хăйĕн сăмахне Верховнăй Главнокомандующие Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташа сывлăх сунса вĕçлет. Митингра пулнисем тăвăллăн алă çупса аслă Сталина саламлаççĕ.

А. ЕРМАКОВА.

Пирĕн халăха никам та çĕнтереймĕ

КĂШАВĂШ. (Ишлей районĕ). майăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн ял Советне кĕрекен кашни колхозрах савăнăçлă митингсем пулса иртрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем ирсĕр тăшмана аркатса тăкни çинчен калакан хыпара калама çук пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра митинг пулса иртрĕ. Митинга пухăннă çынсене çак савăнăçлă хыпара ВКП(б) райкомĕн представителĕ Андреев юлташ каласа пачĕ.

Ун хыççăн Я. Ф. Корнилов, Е. Соловьева, Сукова тата ытти юлташсем тухса каларĕç. Колхозница Екатерина Соловьева çапла каларĕ: Аслă Сталин чĕннипе, эпир колхоза пĕрлешрĕмĕр. Колхозра пĕрлешсе ĕçленипе пула, вăрçăн йывăр çулĕсенче те тутă пултăмăр, фронтра кĕрешекенсене валли те çителĕклĕ апат-çимĕç парса тăтăмăр. Эпир государство умĕнче парăмлă мар. Вăрçă пирки пирĕн уйхирте хытса юлнă анасем, ялта юхăннă çуртĕрсем çук. Çакă вăл эпир колхоза пĕрлешнĕ пирки кăна пулма пултарчĕ.

Учительница Суркова юлташ хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртрĕ: вăрçă çулĕсенче те пирĕн ачасем шкулта лайăх вĕренчĕç. Ялта шкул тулашне юлнă пĕр ача та çук. Паян, çĕнтерӳ килнĕ кун, эпир Сталин юлташа çапла ответлетпĕр: малалла та хамăр Тăван çĕршыва тĕреклетессишĕн пĕтĕм вăя тата пĕлĕве хурăпăр. Отечественнăй аслă вăрçăра пирĕн ирĕклĕхшĕн, чысшăн тата никама пăхăнманлăхшăн кĕрешсе вилнĕ паттăрсен ачисене хамăр тăван ачасене пăхнă пек пăхса çитĕнтерĕпĕр. Вăрçăра аманса килнĕ паттăр воинсемпе офицерсене тимлĕн пулăшса пырăпăр.

Колхозниксемпе колхозницăсем пысăк савăнăçпа, пĕр кăмăллă пулса, çураки ĕçĕсене майăн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех вĕçлеме пулчĕç.

А. СОЛОВЬЕВ.
Кăшавăш ял Совет председателĕ.

Татах та лайăхрах ĕçлес килет!

МУРКАШ. майăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем тата служащисем вăрçă чарăннă хыпара çав тери савăнăçлăн кĕтсе илчĕç. Çак ятпа колхозсенче митингсем пулса иртеççĕ. Паян кăнтăрлаччен районри 77 колхозран 65-мĕшĕнче митингсем пулса иртнĕ. Паянхи кун чăнниппех те халăх уявĕ пулса тăчĕ.

Кашмашри «Свобода» колхозри митингра бригадир Краснова çапла каларĕ:

— Вăрçă чарăнчĕ. Ĕнтĕ пирĕн йĕкĕтсем те кĕçех фронтран таврăнĕç. Мĕн тери савăнăç! Тата лайăхрах ĕçлес килет.

Краснова хăйĕн бригадинче çуртрисене тепĕр 3 кунтан акса пĕтерме сăмах парать.

«Свобода» колхоз ку тарниччен пурĕ 128 гектар тĕштырăсемпе курăксем акса хăварнă. Ака ĕçĕсем кунта лайăх пулса пыраççĕ.

Çак савăнăçлă кунсенче районра заем укçи пухасси палăрмаллах вăйланчĕ. Паянхи куна районĕпе пурĕ 2.421.000 тенкĕ пухнă. Шурчари колхозница, фронтовик арăмĕ Перасковия Иванова, 5 ача пăхса ӳстерекенскер, вăрçă чарăнни çинчен пĕлсен, çĕнĕ зема 800 тенкĕлĕх çырăннă та укçине 550 тенкĕ тӳленĕ.

— Юлашкине ыран-паянах парса тататăп,—тет вăл.

В. ИЛЬИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çулпуç совет халăхне çĕнтерӳ патне илсе çитерчĕ

Шупашкарти тир-сăран заводĕнчи рабочисем Çĕнтерӳ кунĕ çинчен радиопа итленĕ хыççăн, халиччен пулман савăнăçлă туйăмпа ирех завода пуçтаранчĕç. Вĕсем пĕр-пĕрне аслă уяв ячĕпе саламлаççĕ, ыталаса чуптăваççĕ, вĕсен пичĕсем çинче савăнăç куççулĕсем ялкăшаççĕ. Кашниех хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа пама васкаççĕ. Çавăнтах митинг пуçланчĕ.

— Радио калама çук ырă хыпар пĕлтерчĕ. Тăшман пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара пĕр сăмахсăрах парăнчĕ. Паян, майăн 9-мĕшĕ—Çĕнтерӳ кунĕ, халăх уявĕ пулса тăчĕ. Çак уява эпир тахçантанпа кĕтнĕ, ăна çывхартассишĕн ырми-канми ĕçленĕ,—терĕ митинга уçса завод директорĕ Башкиров юлташ.

Вăл юлашкинчен заводри рабочисене уяв ячĕпе сывлăх сунса саламларĕ.

Унтан заводри главнăй инженер Поляков юлташ çапла каларĕ:

— Çак чаплă çĕнтерĕве совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар аслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе турĕç. Çулпуç совет халăхне çак йывăр вăрçă витĕр çĕнтерӳ патне илсе çитерчĕ. Вăрçăран çĕнтерсе тухни пире татах та тухăçлăрах ĕçлеме вăй-хăват парать.

Митингра пулнисен пурин те пĕр ĕмĕт, пĕр шухăш-кăмăл, пĕр туйăм. Вĕсем çĕнтерӳ организаторне Верховнăй Главнокомандующие Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташа чун-чĕререн тав тăваççĕ. Митингра пулнисем, вăрçă чарăннипе хавасланса, май уйăхĕнчи программăна срокчен тултарма пулчĕç.

ПИР-АВĂР ФАБРИКИНЧИ МИТИНГ

Фабрикăра ĕçлекенсем паян ирхине пурте пĕр çын пек пулса митинга пухăнчĕç. Гитлерла Германи пĕр сăмахсăрах парăнни çинчен татах та тĕнлĕнрех пĕлесшĕн вĕсем. Германи вăрçăра парăнни çинчен фабрика директорĕ Д. Шустерман юлташ каласа парать. Ун хыççăн фабрикăри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Л. Кошевер юлташ сăмах илет:

— Совет ĕççыннийĕсем ырми-канми ĕçленипе, Хĕрлĕ Çар паттăррăн çапăçнипе тата союзниксем пулăшса пынипе Отечественнăй аслă вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленчĕ, гитлерла Германи пусĕпех парăнчĕ. Пирĕншĕн аслă уяв çитрĕ. Паян эпир çав уява, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисемпе пĕрле, савăнса уявлатпăр.

Çавăн пекех, хавасла сăмах фабрикăри паллă стахановец А. Фомичев юлташ тухса каларĕ. Вăл Сталин юлташпа Хĕрлĕ Çара тав туса, малашне татах та тухăçлăрах ĕçлеме сăмах пачĕ.

Митингра фабрика коллективĕ, малашне тумалли ĕçсене палăртса, обязательство илчĕ.

Çулталăкри нормăна тултараççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Каранъялĕнчи «Труд» промартель 1-мĕш квартал планне чылай ирттерсе тултарчĕ.

Социализмлă ăмăртура аластаççен ĕç тухăçлăхĕ татах ӳсрĕ. Кашни аластаç хăйĕн обязательствине пурнăçлассишĕн кĕрешет. О. Еремеева стахановка Май уявне çулталăкри нормăна пĕтĕмпех тултарнипе паллă турĕ. Д. Григорьев, А. Степанова, М. Назаров тата К. Герасимова аластаççем те çулталăкри нормăна тултарса пыраççĕ.

Р. Николаева юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригади çулталăкри задание июль уйăхĕнче тултарма обязательство илнĕ. Бригада çав обязательствăна пурнăçласса шанма пулать,—вăл халĕ кулленхи нормăна 245 процент тултарса ĕçлет.

И. МОКЕЕВ.
«Труд» промартель председателĕ.

Парăнасси çинчен çырнă акт çине алă пусас умĕн

БЕРЛИН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Çулсем, вуншар çулсем, ĕмĕрсем иртĕç. Анчах 1945 çулхи майăн 8-мĕш кунне,—тĕрĕслĕх уявĕн кунне, гитлерла Германие çĕнтернĕ куна—тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсем ĕмĕр-ĕмĕр асра тытĕç, уявлĕç.

Берлин. Çуллахи хĕвеллĕ шăрăх кун. Бетон сарнă çулсем туса тултарнă Темпельгоф аэродромĕнче, нумаях та пулмасть свастикăллă самолетсем вĕçсе хăпарнă скерĕнче, халĕ совет истребителĕсем йăлтăртатса лараççĕ. Нимĕç самолечĕсем халĕ ванчăк тимĕр-тăмăр купиçенче, ишĕлнĕ ангарсенче выртаççĕ. Истребительсем пĕрин хыççăн тепри вĕçе-вĕççе хăпараççĕ. Вĕсене Тюлькин майор ертсе пырать. Летчик-истребительсен халь хисеплĕ задача: вĕсен союзниксен Верховнăй Главнокомандованийĕн экспедициллĕ вăйĕсен делегацийĕ вĕççе килекен самолетсене пĕлĕтре кĕтсе илмелле.

Çил Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин государство ялавĕсене вĕлкĕштерет. Делегаци 14 сехетре килсе çитмелле. 13 сехет те 50 минутра хĕвеланăç енчен ерипен мотор кĕрлени илтĕнме пуçлать. Часах икĕ «Дуглас» курăнса кайрĕç. Унтан виçĕмĕшĕ те сывăхарса килме пуçларĕ. Вĕсем аэродром тĕлĕнче. Берлин тĕлĕнче вĕççе çаврăнаççĕ те ларма аялала анаççĕ. 13 сехет те 58 минутра пĕррремĕш машинăн урапиçем Берлин аэродромĕн çĕрĕ çине перĕнеççĕ. Кĕмĕл тĕслĕ «Дуглас» бетон сарнă çул çинче чупать. Алăкĕсем уçăлаççĕ те союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй Командованийĕн представителĕ авиацин Главнăй Маршалĕ Теддер тухать. Ун хыççăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен сывлăшри стратегиллĕ вăйĕсен командующийĕ Спаатс генерал, союзниксен Европăри тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ Гарольд Бэрроу адмирал тухаççĕ.

Килнисене Васильев генерал-лейтенант саламлать.

Унтан тата икĕ самолет, ытти делегатсемпе пресса представителĕсене илсе килекенскерсем, анса лараççĕ. Тин çеç çитнисене кĕтсе илме Совет командованийĕн представителĕ арми генералĕ Соколовский, Берзарин генерал-полковник, Боков генерал-лейтенант пыраççĕ. Хисеплĕ караул йĕркеленсе тăрать. Малта СССР, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобритани ялавĕсем. Оркестр Америкăн, Англин тата Совет Союзĕн гимнĕсене вылять. Лебедев полковник авиацин Главнăй Маршалне Теддера хисеплĕ караула йĕркелесе тăратни çинчен рапорт парать. Делегаци пуçлăхĕ, килнĕ ытти çынсемпе пĕрле, хисеплĕ караула пăхса тухать. Ку парадпа пире питĕ пысăк чыс турăр, тет Теддер. Ăна хирĕç, çĕнтерӳве чысласа, Берлин тĕлĕнче красноармеецсем «урра» кăшкăрни янăраса каять.

Тăваттăмĕш «Дуглас» вĕççе килет. Ку машина нимĕçсен арккатса тăкнă çарĕн командованийĕн представителĕсене Берлина илсе килет. Акă, Америка офицерĕсемпе пĕрле Кейтель фельдмаршал, Ганс Фридебург генерал-адмирал, Штумпф генерал-полковник утса пыраççĕ. Нимĕççене автомашинăсем патне илсе пыраççĕ.

Микрофон умĕнче авиацин Главнăй Маршалĕ Теддер сăмах калать. Вăл хăй Главнокомандующин Эйзенхауэрăн уполномоченнăйĕ пулни çинчен пĕлтерет. Вăл совет маршалĕсемпе генералĕсене, Хĕрлĕ Çара хаваслăн саламлать, вĕсене шăпах çĕнтĕ Берлинра саламланăшăн татах та ытларах хаваслани çинчен каласа парать.

— Хĕвеланăçĕнче тата хĕвелтухăçĕнче союзниксем, пĕр-пĕрин килĕштерсе ĕçленине пула, çав тери пысăк ĕç турĕç,—тет вăл.

Союзниксен делегацийĕпе Совет командованийĕн представителĕсем автомашинăсем çине лараççĕ. Пĕтĕм хула урлă вĕсем Берлинпа çыпăçса ларнă Карлсхорст яла каяççĕ. 14 сехет те 40 минутра аэродрома Парижран Францин Делатр де Тассиньи генерал ертсе пыракан делегацийĕ çитет.

Б. АФАНАСЬЕВ,
К. СУХИН.

Вăрçăра парăнни çинчен çырнă акт çине алă пусни

БЕРЛИН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Самолетсем вĕççе çитнĕ хыççăн тепĕр çур сехетрен авиацин Главнăй Маршалĕ Теддер Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков патне пырать. Теддер Жуков Маршала çĕнтерӳ ячĕпе саламлать те пĕрлешнĕ Вăйсене палăртакан тĕрленĕ шурă пурçăн ялав парать. Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков та союзлă командованин представителĕсене саламлать. Фашистла Германие çĕнтернĕ ятпа Франци çарĕн Главнокомандующийĕ арми генералĕ Делатр де Тассиньи те Жуков Маршал патне пырса саламлать. Вăл, Хĕрлĕ Çара де Голль ячĕпе тата Франци халăхĕ ячĕпе саламласа, Франци ирĕке кăларас ĕçре вырăс халăхĕн кĕрешĕвĕ питĕ пысăк пулăшу пачĕ, те... Çакăн хыççăн Жуков Маршал авиацин Главнăй Маршалĕпе Теддерпа калаçса илет.

Историллĕ ĕç, пур те кĕтекен ĕç кăвак çуртра, Цвизелерштрассепе Райнштайнштрассе урамĕсем пĕрлешнĕ кĕтесри çуртра, ĕлĕк Берлинри çар инженери училищи вырнаçнă çуртра пулмалла. Икĕ енчен çутă кĕрекен пысăк залра—чыслă та йĕркеллĕ. Конференцие килекен çынсем валли вăрăм сĕтелсем хатĕрлесе лартнă. Зала тăватă нации ялавĕсем—ССР Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин тата Францин ялавĕсем илемлетеççĕ.

Тĕттĕм çĕр. Зала Совет Союзĕн Маршалĕ Жуковпа авиацин Главнăй Маршалĕ Теддер пырса кĕреççĕ. Вĕсем хыççăн союзлă государствăсен представителĕсем, делегаци членĕсем, кĕрсе хăйсен вырăнĕсене йышăнаççĕ. Нации ялавĕсем айĕнчи креслăсене Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков, Теддер, Спаатс, Вышинский, Бэрроу, Делатр де Тассиньи йышăнаççĕ.

Варринчи сĕтеле союзлă державăсен представителĕсем, Берлина туртса илесшĕн çапăçнă чаçсене ертсе пынă Хĕрлĕ Çар генералĕсем йышăнаççĕ. Пичет представителĕсен сĕтелĕсем хушшинче—совет тата ют çĕршыв журналисчĕсем лараççĕ. Пĕр сĕтел хушшинче халĕ никам та çук-ха. Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков пухăннă çынсене çапла чĕнсе калать:

— Господинсем, эпир кунта Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандовани хушнипе—Верховный Главнокомандующин Заместителĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков, союзниксен Экспедициллĕ вăйĕсен Верховный Главнокомандованийĕ хушнипе—авиацин Главнăй Маршалĕ Теддер; çавăн пекех тата Америка çарĕн генерал-полковникĕ Спаатс, Франци çарĕнчен Делатр де Тассиньи—Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕнчен вĕсем пĕр сăмахсăр парăнмалли условисене йышăнма пухăнтăмăр. Эпĕ ĕçе тытăнма тата Германи командованин уполномоченнăйĕсене кунта чĕнсе кĕртме хушатăп.

Унтан Маршал приказ парать:

— Пĕр сăмахсăр парăнмалли условисене йышăнмашкăн нимĕçсен верховнăй главнокомандованийĕн представителĕсене кĕме хушăр.

Зала Германи çарĕн генерал-фельдмаршалĕ Кейтель, генерал-адмирал Фридебург, генерал-полковник Штумпф хăйсен адъютанчĕсемпе кĕреççĕ. Шăплăхра фельдмаршал Кейтель хăйĕн çыннисемпе пĕрле нимĕç командованийĕн представителĕсем валли хатĕрленĕ вырăнсене йышăнать.

Маршал Жуков каллех сăмах калать:

— Господинсем, халĕ пĕр сăмахсăр парăнни çинчен çырнă акт çине алă пусатăр. Эпĕ Германин верховнăй главнокомандованийĕн представителĕсене çапла ыйту паратăп: вĕсен аллинче акт пур-и, вĕсем унпа паллашнă-и, Германи командованийĕн представителĕсем çав акт çине алă пусма килĕшеççĕ-и?

Нимĕç çарĕн командованийĕн представителĕсене авиацин Главнăй Маршалĕ Теддер та çавăн пек ыйтусемех парать. Пухăннисем пурте ответ кĕтеççĕ. Шăп.

— Эпĕ килĕшетĕп,—тет шăппăн нимĕç çарĕн генерал-фельдмаршалĕ Кейтель, Жуков Маршала хăйсен Главнăй ставкин гросс-адмирал Дениц алă пуснă документне парса. Çав документра Кейтеле хĕçпăшаллă вăйсен шефĕн тата çакăнна пĕр вăхăтрах çарăн командующийĕ вырăнне хурса, фон Фридебурга тинĕс-çар вăйĕсен командованийĕн вырăнне хурса, Штумпфа сывлăшри вăйсен представителĕ вырăнне хурса,—Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховнăй Главнокомандованийĕпе союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен командованине пĕр сăмахсăр парăнни çинчен çырнă акт çине алă пусма хушнине ĕнентерсе кăтартнă.

Форма тĕлĕшĕнчен кирлĕ ĕçсене тунă. Жуков Маршал Германи çарĕн верховнăй командованин уполномоченнăйĕсене, сĕтел патне пырса, акт çине алă пусма хушать. Кейтель, Фридебург тата Штумпф пĕрин хыççăн тепри акт çине алă пусаççĕ.

Фотоаппаратсем тата кинокамера çав событие ӳкерсе илеççĕ.

Акт çине алă пуснă. Германи пĕр сăмахсăрах парăннă. Акта виçĕ чĕлхепе çырнă, унăн пĕр экземплярне Кейтель фельдмаршала параççĕ. Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков çапла пĕлтерет: нимĕç делегацийĕ кайма пултарать, тет.

Б. АФАНАСЬЕВ,
К. СУХИН.

Çĕршыва тĕреклетме—пиншер тенкĕ укçа

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемĕ Тăван çĕршыва малалла вăйлатса пымалли заем пулса тăрать. Çавăнпа ăна пирĕн республикăри рабочисемпе колхозниксем тата служащисем активлăн çырăнса илеççĕ. Правительство çĕнĕ заем кăларасси çинчен пĕлтернĕ кунах республикăра ăна 78 миллион тенкĕлĕх ...ла сарнă. Майăн 9-мĕшĕ тĕлне заема республикăра 134.118.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Укçине 34.601.000 тенкĕ пухса государство банкне хывнă.

Çĕнтерӳ заемне сарас ĕçре Шупашкар хулинчи ĕççыннисем малта пыраççĕ. Кунта заема бюджетпа 9.135.000 тенкĕлĕх сарма палăртнă пулсан, малтанхи кунах 10.623.000 тенкĕлĕх сарнă. Канаш хулинче те çĕнĕ заема бюджетпа пăхнинчен ытларах вырнаçтарнă.

Заем сарас ĕç колхозсенче тата колхозниксем хушшинче те ăнăçлăн пырать. Ку тĕлĕшпе халĕ Сĕнтĕр, Шупашкар, Шăхасан, Тăвай, Вăрнар тата ытти районсем лайăх ĕçлеççĕ.

Ялсенче заема çырăннипе пĕр вăхăтрах укçине те тӳлеççĕ. Çĕнтерӳ çитнипе савăнса, ĕç хресченĕсем хăйсен перекетленĕ укçине государствăна кивçен параççĕ. Укçа пухас тĕлĕшпе Муркаш, Вăрмар, Куславкка, Чурачăк, Вăрнар тата Красноармейски районсем малта пыраççĕ.

Заем сарас ĕç хуласенче: «Уйăхри ĕç укçи чухлĕ государствăна кивçен парар!» текен лозунгпа пырать. Чылай рабочисемпе служащисем уйăхри ĕç укçинчен те ытларах çырăнма кăмăл тăваççĕ. Канашри моторсем юсакан заводра ĕçлекен тракторист Смирнов юлташ, уйăхне 232 тенкĕ ĕçлесе илекенскер, заема 3.000 тенкĕлĕх çырăннă. Вăрнар лесничествин объездчикĕ Зайцев юлташ уйăхри ĕç укçин 500 процентĕ чухлĕ, лесник Коснаров юлташ—800 процент чухлĕ çырăнса илнĕ.

Çĕнĕ заема уйрăмах колхозниксемпе колхозницăсем нумай çырăнаççĕ. Вăрнар районĕнчи Зеленовка колхоз председателĕ Смирнов юлташ 5.000 тенкĕлĕх çырăннă. Вăл укçине те çийĕнчех парса татнă. Комсомольски районри «Трактор» колхоз председателĕ Иванова юлташ тата Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Новая жизнь» колхоз председателĕ Зверев юлташ 5-шер пин тенкĕлĕх çырăннă.

Тăватă çула яхăн пынă юнлă вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленчĕ. Йывăр вăрçă чарăннипе халăх çав тери савăнать. Пирĕн ĕççыннисем халь питех те пысăк çĕкленӳпе пурăнаççĕ. Заем сарнă тата укçине пухнă чух ĕççыннисен çав çĕкленĕвĕпе усă курас пулать.

А. МИХАЙЛОВ,
Чăваш республикинчи перекет кассисен Управленийĕн начальникĕ.

Укçине икĕ миллион тенкĕ пухнă

ЧУРАЧĂК, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, районри ĕççыннисем Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне хавхаланса çырăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне районра çĕнĕ заема 3.397.000 тенкĕлĕх, е бюджетпа палăртнин 94,6 процентĕ чухлĕ сарнă.

Колхозсемпе колхозниксем заем укçине çийĕнчех тӳлеме тăрăшаççĕ. Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра заем укçине 100 пин тенкĕ пухса панă. Çавăн пекех «Совет» колхоз—80 пин тенкĕ, «Вучах» колхоз—70 пин тенкĕ, «Победа» колхоз 30 пин тенкĕ тӳленĕ. Çапла вара вĕсем заем укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Районĕпе заем укçине пурĕ 2.159.000 тенкĕ пухса, перекет кассине хывнă. Çакă вăл заем сарнин 63,3 процентĕ чухлĕ шутланать.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсенче заем укçине пухас ĕçе хакламаççĕ. «Оборона» колхозра 20 пин тенкĕ, «Красный Восток» колхозра 9 пин тенкĕ кăна пухнă.

Заем укçине пухасси—пысăк ĕç. Ăна заем сарнипе пĕр вăхăтрах туса пымалла.

Ф. АРТЕМЬЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Тырăпа та, укçапа та пулăшаççĕ

ЕЛЧĔК, майăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем, çĕнтерӳ кунĕ çитнĕшĕн хавасланса, государствăна тырпулпа та, укçа-тенкĕпе те пулăшаççĕ. Халĕ районра заем çырăнакансен йышĕ кунран кун ӳссе пырать. Паянхи кун тĕлне çĕнĕ заема 4.745.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Çĕнĕ заема сарас ĕçе «Марс» колхоз членĕсем пурте пекех хутшăннă. Вĕсем пурĕ пĕрле 300.000 тенкĕлĕх çырăннă. Укçине 100.000 тенкĕ пухса панă. Колхоз председателĕ А. Гаязов—10.000 тенкĕлĕх, колхозниксем Пикмеев, Салахеев, Гималетдинов 7.000-шер тенкĕлĕх, Лунгатуллин—6.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те тӳленĕ. 70 çулхи старик Ахметзянов заема 4.000 тенкĕлĕх çырăннă.

«Комсомолия», «Красный партизан» тата Пушкин ячĕпе тăракан колхозсенче те çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕç ăнăçлăн пырать.

С. МАКАРОВ.

Выляса илнипе илменнине тĕрĕслеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Юлашки вăхăтра районра заем облигацийĕсем выляса илнипе илменнине тĕрĕслеççĕ, нумай çĕрте выляв тухнипе тупаççĕ. Выляса илнĕ облигацисем тăрăх районри перекет касси 55 пин тенкĕ ытла тӳленĕ. Тракторист Скворцов юлташ Иккĕмĕш Военнăй Заем облигацийĕпе 25 пин тенкĕ, ачасен çуртĕнче ĕçлекен Злобин юлташ—5 пин тенкĕ выляса илнĕ.

П. КУРАКОВ.

Сан-Францискăри конференцире В. М. Молотов юлташ калани

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Пресс-конференцире (унта США-н тата Сан-Францискăри конференцие хутшăннă мĕнпур çĕршывсен 600 корреспонденте яхăн пулнă) В. М. Молотов юлташ конференци ĕçĕсен малтанхи пайне пĕтĕçтерсе çапла каланă:

«Конференци ĕçĕсен пĕррремĕш пайĕ çинчен пĕтĕçтерсе калама пулать ĕнтĕ. Думбартон-Оксра йышăннă решенисене тӳрлетме сĕннисене конференцин тăватă председателĕ канашлусенче пăхса тухрĕç. Вĕсем пĕр пек шухăшлани палăрчĕ, çакă вăл конференци ăнăçăвĕшĕн питĕ паха. Комиссисемпе подкомиссисем ĕçе тытăнчĕç, вĕсенче Пĕрлешнĕ мĕнпур нацисен представителĕсем кивĕ тата çĕнĕ сĕнӳсемпе тӳрлетӳсене пăхса тухрĕç. Совет делегацийĕ председательсен канашлăвĕнче йышăннă çак тӳрлетӳсене пуринчен пысăкрах вырăна хурать:

1. «Тĕллевсем» тенĕ сыпăкра халь тĕрĕслĕх принципĕпе пĕтĕм тĕнчери право принципне пурнăçласа пымалли çинчен ятарласа каласа хунă. Унтах тата халăхсен пĕртанлăхĕпе самоопределенийĕ çинчен калакан принципсене хисеплеме кирли çинчен каланă. Çакна Совет Союзĕ яланах чи пысăк вырăна хурса пыраннă. Хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организацин пĕртанлăхпа самоопределени принципĕсем çине колонисемпе мандатлă территорисенчи халăхсем уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхĕç, çакă çав аслă принципсене пурнăçа кĕртес ĕçе кирлĕ пек хăвăртлатма пулăшĕ. Кунсăр пуçне, «Тĕллевсем» тенĕ сыпăкра халь ĕнтĕ этемĕн прависене тата мĕнпур çынсен тĕп ирĕклĕхĕсене, вĕсем расине, чĕлхине, тĕнне тата арçынне-хĕрарăмне пăхмасăр, хисеплес ĕçе пулăшмаллине кăтартса панă.

Çакăн пек программа хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организацие фашистла çĕршывсем хутшăннипе килĕшме пултараймасть. Çакă вăл çапла пулмалла та, мĕншĕн тесен фашизмлă çĕршывсем (эпир ăна пĕлетпĕр ĕнтĕ) хура реакцин центрĕсем çеç пулса тăмаççĕ, вĕсем тата вăрçă вучахĕсем пулса тăраççĕ, вĕсем миршĕн тата халăхсен хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшма пултараймаççĕ. Совет делегацийĕ этемĕн чи паха прависен шутне ĕçлĕх правине тата вĕренсе çутта тухас правăна кĕртме хăй сĕннине йышăнтарма урăх тăрăшмарĕ. Тĕрлĕ правăсем çине кăтартни кирлĕ тесе каланăччĕ, анчах çакна ăнланмалла мар-и вара: сăмахран, вăрçă тапхăрĕнчен мир тапхăрне куçнă вăхăтра, çынсем йышлăн ĕçсĕр тăрса юлас хăрушлăх калама çук пысăкланса кайнă вăхăтра, ĕçлĕх прави ĕççыннисемшĕн уйрăмах паха право пулса тăрать.

2. Пичетре вăрçă вăхăтĕнче тунă договорсене тепĕр хут пăхса тухма кирли çинчен çырнăччĕ. Çапла çырнă чухне халь аяла пулнă агрессиллĕ çĕршывсем тунă договорсене, çавăн пекех тата, халь çапса çĕмĕрнĕ «тĕнĕл» çĕршывĕсем вăрçă хыççăнхи вăхăтра тепĕр хут тапăнма ан пултарччăр тесе, хăшпĕр Пĕрлешнĕ çĕршывсем тунă договорсене асра тытнă пулмалла. Çакна ăнланма йывăр мар: çав асăннă договорсене тепĕр хут пăхса тухма кирлĕ тесе калани тăшманла çĕршывсемшĕн усăллă пулнă пулĕччĕ, тăшманла çĕршывсен çав договорсене халех хавшатас килет, вĕсен вăйне пĕтерес килет. Тата çакна та курмасăр тăма çук: çав договорсене пăхмашкăн пĕтĕм тĕнчери организацие пама хăтлани—вĕсене алă пуснă государствăсен прависене пăсни пулнă пулĕччĕ. Çакă вăл Думбартон-Оксра йышăннă принципсене тӳрех хирĕç пынă пулĕччĕ. Çав принципсем вĕсем хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организацин членĕсем пулса тăракан государствăсен прависене йышăнма кирлине палăртса хунă. Паллах ĕнтĕ, договорсене тепĕр хут пăхса тухас тенĕ шухăша, тĕрĕс мар тесе, сирсе янă.

3. Договорсем пирки тăракан ыйтăва тата тепĕр енчен те пăхса тухнă. Совет Союзĕ, сăмахран, пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен Англипе, Франципе, Чехословакипе, Югославипе, Польшăпа договорсем тунă. Çав договорсене 20 çуллăха тунă, вĕсене Германие ытти çĕршывсене çĕнĕрен тапăнма парас мар тесе тунă. Çавăн пек договорсене ытти çĕршывсем те тума пултараççĕ. Сăмахран, Англипе Франци çавăн пек договор тума пултараççĕ. Тапăнма парас мар тесе лартнă задачăсене хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организаци чăн-чăнах хăй çине илме пултарать ĕнтĕ тесе тивĕçлĕ правительствăсем шутличчен, çавăн пек договорсем çаплипех юлмалла, тесе килĕшнĕ. Халăхсен хăрушсăрлăхĕн интересĕсемпе килĕшсе тăракан решение тупнă, тесе шутлатăп эпĕ.

4. Çак факт кăтартуллă: Хăрушсăрлăх совечĕн пĕлтерĕшĕпе организацири вырăнне улăштаракан нимĕнле сĕнӳ те паман. Çакă халăхсен вăрçă хыççăнхи хăрушсăрлăхĕн тĕп ыйтăвĕ пирки ертсе пыракан державăсем пĕр пек шухăшлапине тепĕр хут кăтартса пачĕ. Конференцие хутшăннă ытти çĕршывсем те çав çулпах кайĕç тесе шанма пулать.

5. Территориллĕ опека пирки юлашки кунсенче кăна сĕнӳсем пачĕç, çав сĕнӳсене халь хаçатсем анлăн сӳтсе яваççĕ. Çак тĕлĕшпе Америкăпа Англи тунă сĕнӳсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăракан тĕрлĕ сĕнӳсем пулса тăраççĕ, вĕсене тĕпчесе вĕренмелле пулать. Совет делегацийĕ çакă паллă: пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăх интересĕсем енчен пăхсан, пирĕн, пуринчен малтан, пăхăнса тăракан çĕршывсем никама пăхăнманлăх çулĕ çине часрах тухма пултарччăр тесе тăрăшмалла. Çакна тума Пĕрлешнĕ нацисен ятарласа тунă организацийĕ пулăшмалла. Çав организаци халăхсен пĕртанлăхĕпе самоопределенийĕ çинчен калакан принципсене пурнăçлас тесе ĕçлемелле. Совет делегацийĕ çав ыйтăва пăхса тухас ĕçе активлăн хутшăнĕ.

Юлашкинчен эпĕ çапла шанса каласшăн: конференци çитес ик-виçĕ эрне хушшинче тĕп ыйтусене пурне те пăхса тухма пултарĕ. Халĕ, Хĕрлĕ Çарпа союзниксен çарĕн паттăрлăхĕ Европăра эпир çĕнтерессине пурнăçлас вăхăтра, конференцин пĕтĕм ĕçне часрах малалла ямалла тата хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организацин никĕсне хывса хăвармалла».

Çак çырнă заявление вуласа панă хыççăн В. М. Молотов юлташ корреспондентсен ыйтăвĕсем çине ответсем панă. Пĕр корреспондент çапла ыйтнă: çĕнтерӳ кунĕ çывхарса çитнĕ май Совет Союзĕн Япони тĕлĕшпе тытса пыракан политики мĕн чухлĕ те пулсан улшăнасси çинчен В. М. Молотов каласа параймĕ-и? тенĕ. В. М. Молотов çапла ответленĕ: Совет правительстви çак ыйту пирки хăйĕн шухăшĕсене апрель уйăхĕн пуçламăшĕнче каласа пачĕ, тенĕ. Çав корреспондент В. М. Молотов Совет правительстви каланине тепĕр хут каласа патăр тесе çине тăрсах ыйтсан, Молотов çапла каланă: çавăн пек заявление аса килнĕ тăрăх калама йывăр, корреспондент ыйтать пулсан, çав заявлени текстне хут çине çырса илсе килĕç, тенĕ. Пĕр корреспондент çапла ыйтнă: В. М. Молотов пресс-конференци пухса иртерни пичет тĕлĕшпе совет политики улшăннине пĕлтерет тесе калама юрать-и? тенĕ тата çапла каланă: кунта ларакан корреспондентсем пурте, пресс-конференцисем пĕрлехи ĕçе пулăшаççĕ тесе шутласа, вĕсемпе питĕ кăмăллă, тенĕ. В. М. Молотов çапла ответленĕ: «Пресс-конференцисем вĕсем хăйсем пĕлтернисĕр пуçне урăх ниме те пĕлтермеççĕ, урăхла каласан—вĕсем конференцире пирĕн совет делегацийĕ тунă ĕçсем çинчен каласа пани пулса тăраççĕ», тенĕ.

В. М. Молотов Данине Сан-Францискăна чĕннине ырланă пулĕччĕ-и? тесе ыйтсан, В. М. Молотов çапла каланă: ку ĕç манран çеç килмест, анчах хăрушсăрлăх конференцийĕнче Дани пурри питĕ лайăх пулнă пулĕччĕ, тенĕ.

Конференцире Молотов палăртнă либераллă политикăна шута илсе каласан, Корейăн никама пăхăнманлăхĕ тĕлĕшпе Совет Союзĕн политики мĕнле пулнă пулĕччĕ? тесе ыйтнă. В. М. Молотов çапла ответленĕ: «Ку ыйту пирки шухăшласа пăхмалла, вăхăт пур-ха», тенĕ. Пĕр корреспондент 16 поляка арестленĕ пирки Польша ыйтăвне сӳтсе-явма пĕр вăхăта чарăннă тесе пĕлтерни çинчен хăйĕн шухăшне каласа пама ыйтнă. В. М. Молотов пресс-конференцире Польша ыйтăвĕ çинчен каламасăр иртсе кайма çук курăнать, тенĕ те çапла ыйтнă: корреспондентсен çакăн çинчен ытти ыйтусем пулмĕç-и? тенĕ. Территориллĕ опека пирки Англипе Америка сĕннине В. М. Молотов ырлать-и? тесе ыйтсан, В. М. Молотов çапла каланă: «Американецсен тата акăлчансен опека пирки тунă сĕнĕвĕсем питĕ интереслĕ. Эпир вĕсене çав тери тимлĕн вĕренетпĕр, хамăр шухăша вара каласа парăпăр», тенĕ. В. М. Молотовран çапла ыйтнă: Испанин хальхи правительствине Сан-Францискăри конференцие чĕнес пулсан, Совет делегацийĕ çакăн çине мĕнле пăхнă пулĕччĕ? тенĕ. В. М. Молотов çапла ответленĕ: «Ку ыйту ытти та уçăмлă, ун çине ответлеме те кирлĕ мар», тенĕ.

Пĕр корреспондент мĕншĕн совет правительстви 16 поляка арестлени çинчен маларах пĕлтермен? тесе ыйтсан, В. М. Молотов çапла каланă: эпĕ Польша ыйтăвĕ пирки ответ паратăп. Союзниксем Югослави ыйтăвне, часах татса парайман пулин те, ăнăçлăн татса пачĕç. Польша ыйтăвне те ăнăçлăн татса парасси пирки эпĕ иккĕленместĕп. Тĕп ĕç кунта çакă: Польша ыйтăвне поляксем хăйсем ыйтнă пек татса пани кирлĕ.

Çакăнпа В. М. Молотов пресс-конференцие хупнă.

Думбартон-Оксра тунă сĕнӳсене тӳрлетнине йышăнни çинчен Стеттиниус калани

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Стеттиниус тата Пĕрлешнĕ Нацисен делегацийĕн ытти членĕсем пресс-конференцире çапла каланă: конференцие организациленĕ тăватă çĕршыв делегацийĕсен руководителĕсем, темиçе кун хушшинче ултă хут канашласа, Думбартон-Оксра çырса хатĕрленĕ сĕнӳсене тӳрлетме сĕннисем пирки (чылайĕшĕ пирки) калаçса татăлнă.

Конференцие организациленĕ тăватă держава калаçса татăлса конференцие пĕрле тăратма килĕшнĕ тӳрлетӳсем хушшинче Думбартон-Оксра йышăннă программăн 1-мĕш сыпăкĕ çумне хушса хуни пур. Çав сыпăк çумне тĕрĕслĕх, пĕтĕм тĕнчери право, пĕртан правалăх тата халăхсен самоопределенийĕ çинчен калакан принципсемшĕн тăрасси çинчен каласа панисене, çавăн пекех тата расине-мĕнне, мĕнле чĕлхепе калаçнине, мĕнле тĕн тытса пурăннине тата арçынне-хĕрарăмне пăхмасăр, мĕнпур çынсен прависемпе тĕп ирĕклĕхĕсене хисеплеме пулни çинчен каласа панине хушса хунă. Тепĕр тӳрлетӳре çапла каланă: пĕр-пĕринпе тавлашакан çĕршывсем ыйтсан, Хăрушсăрлăх совечĕ çав тава мирлĕ майпа татса памалли йĕркене кăтартса пама çеç мар, килĕшӳ условийĕсене те кăтартса пама пултарать.

Стеттиниус тата çапла каланă: кунсăр пуçне, тăватă держава йышăннă тӳрлетӳ тăрăх, татăклă килĕшӳ тăвиччен Совет çав тавлашакан çĕршывсене хăйсен тавне вăйлатса ярас мар тесе тăрăшса ĕçлеме сĕнме пултарать.

Тепĕр тӳрлетӳре пĕтĕм тĕнчери организаци уставне пурнăçа кĕртмелли йĕрке çинчен пĕррремĕш хут каласа панă. Çав тӳрлетӳ тăрăх, пĕтĕм тĕнчери организацин устав Советăн яланхи 5 членĕ тата пĕтĕм тĕнчери организацин ытти членĕсен ытларахăшĕ ратификацилесен пурнăçа кĕрет. Çав тӳрлетӳре тата устава малашне тӳрлетессине йышăнас тĕлĕшпе те çав йĕркех юлмалли çинчен каланă.

Стеттиниус тата çапла пĕлтернĕ: конференцие организациленĕ 4 çĕршыв çак тӳрлетӳ пирки те калаçса татăлчĕç: Хăрушсăрлăх совечĕ килĕшсен, генеральнăй ассамблея устава тӳрлетме сĕнмешкĕн малашне кирек мĕнле вăхăтра та пĕтĕмĕшле конференци пухма пултарать.

Конференцие организациленĕ тăватă держава устава тӳрлетме сĕннисем пирки калаçса татăлни çинчен Стеттиниус çапла каланă:

«Эпĕ çапла шутлатăп: организаторсем пулса тăракан правительствăсем çав тӳрлетӳсем пирки часах калаçса татăлса питĕ анлă килĕшӳ туни пирĕн ĕç ăнăçлăн вĕçленессишĕн питĕ паха пулса тăрать», тенĕ.

БОНОМИ ÇУРÇĔР ИТАЛИРИ ИРĔКЛĔХ КОМИТЕЧĔН ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМПЕ КАЛАÇНИ

ПАРИЖ, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви Римран çапла пĕлтерет:

Бономи Çурçĕр Италири Ирĕклĕх комитечĕн представителĕсемпе калаçнă чухне çав представительсем фашизма хирĕçле партисен çĕнĕ правительствине тăвасси пирки пилĕк требовани кăларса тăратнă. Уйрăм илсе кăтартсан, вĕсем çапла туми ыйтнă:

Политика тĕлĕшпе те, администраци тĕлĕшпе те, экономика тĕлĕшпе те тасату туса иртермелле;

Префектсемпе тата районрипе облаçри ирĕклĕх комитечĕсем хушшинчи çыхăнăва «демократи майлă» йĕркелемелле;

Экономикăна урăхлатмалли план туса хумалла, экономикăна çĕнетсе урăхлатас ĕçе пĕтĕм халăхăн, пуринчен ытла фашистла йĕрке вăхăтĕнче пуйса кайнисем хутшăнмалла;

Çĕр реформине иртермелле;

«Кирек мĕнле национализмран та, фашизм вăхăтĕнчинчен çеç мар, фашизмччен хинчен те тасалнă» тулашри политика, мĕнпур çĕршывсемпе çыхăнса ĕçлеме май паракан политика тытса пымалла.

Кунсăр пуçне, Çурçĕр Италири Ирĕклĕх комитечĕн представителĕсем çакăн пек требовани лартнă: Çурçĕр Италире йышăннă законсене чăн законсем тесе шутламалла, мĕншĕн тесен унти законсем демократиллĕрех.

КĔСКЕН

▲ Франци правительстви Испани правительствинчен Лавале Франци влаçсен аллине пама ыйтать. Францин информаци министрĕ Тетжен çапла каланă: Испани Лавале Франци влаçĕсен аллине пама килĕшмесен, Франципе Испани хушшинчи çыхăнусем пăсăлаççĕ, тенĕ.

▲ Францире Америка çарĕсем кĕрешекен фронтра Виши «правительствинче» финанс министрĕ пулса ĕçленĕ Бутильене, Петэн канцелярийĕн генеральнăй секретарĕ пулса ĕçленĕ Лор генерала тата Виши правительствин çамрăксем тĕлĕшпе ĕçленĕ комиссарĕ де Ла Порт Дютейль генерала арестленĕ. Вĕсене пурне те Франципе ăсатаççĕ. Францире вара верховнăй суда параççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Лаша сухалчĕ: тĕсĕ—çӳрен, 7 çулта, çӳллĕшĕ 142 сантиметр, çамкипе сăмси çинче—шурă пăнчăсем. Çак адреспа пĕлтермелле: г. Чебоксары, Чувашская 42, Детской больнице.

ГИТЛЕРĂН ФИНАНС МИНИСТРĔ ПУЛСА ĔÇЛЕНĔ ШАХТА ТЫТКĂНА ИЛНИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Америка çарĕсем çумĕнчи тăракан корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, американецсем Австри чиккинчи Альба хулине йышăнсан, унта Гитлерăн финанс министрĕ пулса ĕçленĕ Шахта тыткăна илнĕ.

ДАНИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУНĂ

КОПЕНГАГЕН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Дани королĕ хушнă тăрăх, Данире çĕнĕ правительство тунă. Çĕнĕ правительствăра премьер-министра Вильгельм Булле, оборона министрне Оле Бьерн-Крафта, ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Кристмас Меллера, мирлĕ договор çинчен калаçусем иртерекен министра Хенрик Бауфмана лартнă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31 3—99, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР ... № 2. Тир. 16.000

НТ 00109